Чувашская книжная палата ... Чувашской АССР

16-мӗш ҫул тухать

# КАПКӐН

№ 7 АПРЕЛЬ 1940 ҫул

„Чӑваш Коммунӗ“ ҫумӗнче тухать

Хӳри вӗҫне туй килсен



е кашни ёҫён хӑй вӑхӑчӗ.

# КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

## Çулçÿревçĕ

Шупашкар вокзалĕн билет касси умĕнче пассажирсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Кĕçех поезд каймалла пулас, чылайĕшин хушшинче нервничать туни, тарăхни палăрать.

— Манăн Куйбышев облаçĕнчи Серные воды текен курорта каймалла. Канма яраççĕ. Анчах... пĕлместĕп!—тет ... и касса умĕнчен аяккалла пăрăнса.

— Мĕн пĕлместĕн?—тет ун умĕн çеç билет илсе тухнă сар чемоданлă пассажир.

— Ара, нимĕн те пĕлместĕп. Мĕнле станцăна çиттиччен билет илмеллине пĕлместĕп. Кассир та пĕлмест. Эпĕ Куйбышев облаçне кайса çÿремен тет. Пире курсра курортсен ячĕсене вĕрентмен тет. А пире колхозра кам вĕрентнĕ, кала-ха тархасшăн?

— Санăн Серные воды текен курорта каймалла тетĕн-и?

— Çавăнта кайма тухнă çав.

— Апла пулсан санăн билет Кÿкĕрт станцине çитиччен илмелле. 32 тенкĕ тăрать... Ну-и çĕршыв унта, эп сана калам та. Халлапри пек! Тем сарлакĕш улăх. Кĕçех ак чечексем тухса тулаççĕ. Çывăхрах Сургут шывĕ. Кăмăлу пулсан, кунĕпех шыва кĕме пултаратăн. Вăрман та инçе мар. Пиллĕк-ултă çухрăмран чăваш ялĕсем пуçланаççĕ. Вĕсене кайса хайма çиме пулать...

Сар чемоданлă çын кĕтмен çĕртенех справкăсем паракан „бюро“ пулса тăрать. Халĕ ĕнтĕ ун йĕри тавра вунă-вунпилĕк çын пуçтарăннă. Пĕри Узбекистана каймалли çула ыйтса пĕлесшĕн, тепри Алтай крайĕн пуянлăхĕсем çинчен ыйтса тĕпчет, виççĕмĕшĕ „Нарспи“ авторĕ К. В. Иванов çуралнă çĕршыва çитсе курасшăн иккен, унта каймалли маршрута çырса илет.

Мĕн кирлине ыйтса пĕлнĕ хыççăн, çынсем сар чемоданлă çынпа хăйпе интересленме тытăнаççĕ.

— Шутсăр ăста железнодорожник иккен эсĕ,—тет вĕсенчен пĕри.—Чугунçул çинче чылайранпах ĕçлетĕн пулмалла эсĕ...

— Эпĕ-и?—тет сар чемоданлă пассажир.—Чугунçул çинче пĕр кун та ĕçлесе курман, нихçан та. Колхозник эпĕ. Трак районĕнчен. Акă справка.

— Мĕнле-ха вара эсĕ пурне те чухлатăн? Пур çĕрте те çитсе курнă пек туйăнать-çке.

— Туйăнать çеç мар, çитсех курнă эпĕ. Пĕлтĕр Осоавиахимăн 13-мĕш лотерейин пĕр тенкĕлĕх билечĕпе СССР тавра курса çаврăнмалли выляв тухнăччĕ. Çавăн чухне курса çÿрерĕм.

## Тĕлĕнтерейменĕн

Письмоносец Бегунов-Саврасов Луговая урамĕнчи пĕр çурт тĕлне çитсен хăраса чарăнса тăчĕ. Вăл пĕрре аллинчи çыру çине, тепре хăйне хирĕç тухнă çыру хуçи çине пăхать.

— Итлĕр-ха, юлташ,—тет вăл юлашкинчен, ури çинчен ури çине хăюсăррăн пускаласа.—Кунта эпĕ нимĕн чухлĕ те айăплă мар. Ку темĕнле... мыскаралла япала пулса тухнă.

— Мĕн пулнă? Мĕн пирки айăплă мар?—тет çыру хуçи.

— Ара,—текелет письмоносец, çав-çавах çырусне хуçине тыттарма именсе.—Чăннипех те аптрамалла япала... Эпĕ ăна пурĕ те паян ирхине çеç илтĕм... Ку капла çынтан кулни пулать вĕт.

— Мĕн çынтан кулни пулать? Мĕн пирки каласатăн эсĕ?

— Мĕн пирки пултăр, çыру пирки. Çак сире памалли çыру пирки каласатăп.

— Ара, мĕн каласмалли пур унта? Пар, кĕрсе вулам. Тахçантанпах кĕтсе пурăнаттăм-ха эп ăна.

— Çавăн пирки каласатăп та,—хăйне ăнланнишĕн савăнса каять письмоносец.—Эсир ăна тахçантанпа кĕтсе пурăннă, а вăл тин çитрĕ. Кураăр-и? Трак почтинче вăл уйăх каярах пулнă, Шупашкара виçĕм кун тин çитнĕ. Ак халĕ эп ăна сирĕн пата илсе килтĕм, паян почтăра пачĕç те...

— Вара?

— Вара ним те мар, çавăнтан тĕлĕнетĕп.

— Паян почтăра илнинчен-и?

— Мар, çырăвĕ уйăх ытла таçта выртнинчен.

— Ара, мĕн тĕлĕнмелли пур унтан?—тĕлĕнме тытăнать çыру хуçи те.—Çыру уйăх ытла таçта выртни вăл нимех те мар-ха. Пирĕн васкавлă телеграммăсем ик-виçшер эрне çухалса çÿрени те пайтах пулкаланă.

— Камсен вăл сирĕн?

— Ара пирĕн, почта работникĕсен. Эпĕ кунти почтăра ĕçлетĕп. Чылайранпах ĕнтĕ.

Çак кун письмоносец Бегунов-Саврасов çакна ăнланчĕ: почта работникĕсене хăшне-пĕрне ни çухалса çÿрекен çырусемпе те, ни пăтрашăнса пĕтнĕ телеграммăсемпе те тĕлĕнтерме çук иккен. Çапла хытă чĕреллĕ çынсем ĕнтĕ вĕсем.

## Хăнăху

Кайрикас ял Совет исполкомĕн председателĕ Сорин пасăртанпах отчетпа аппаланса ларать. Ĕçе тытăннăранпа пĕр графина яхăн шыв ĕçсе ячĕ ĕнтĕ вăл, çур пачкă пирус туртса пĕтерчĕ—çук, ĕç ăнмасть те ăнмасть. Ăна пÿлĕмре темĕн çитмест пек, темĕнле çывăх та хăнăхнă япала хăй вырăнĕнче мар пек туйăнать.

Мĕн çитмест-ши, э? Сорин ручкине таса хут çине хурать те тарăн шухăша кайса йĕри тавра пăхкалама тытăнать. Урай та таптасах ĕнтĕ, паян ирхине çеç çуса тухнă, кĕтесри эрешмен картисем те курăнмаççĕ. Стена çумĕнчи плакатсем те тусанлă мар. Ку енчен пурте йĕркеллĕ темелле. Мĕн çитмест-ха апла пулсан пÿлĕмре? Аптрамалла!

Вăхăта ахаль иртерес мар тесе, Сорин урамалла тухса утать.

„Пӑртак усӑлса ҫӳрес-ха,—тет вӑл урисемпе урамри пылчӑка ҫӑрса.—Тен, ҫурхи сывлӑш кӑмӑла усӗ? Вара отчета ним мар ҫырса пӗтеретӗп“.

* *
*

Ҫӗрле. Пирӗн Сорин юлташ пӗчченех ял Совет исполкомӗн сӗтелӗ хушшинче ларать. Анчах ӗҫсӗр лармасть халь вӑл, хӗрсе кайсах отчет ҫырать. Халӗ унӑн чи екки янӑ вӑхӑт. Вӑл пӳрнисем ывӑнса ҫитсен ҫеҫ ручкине сӗтел ҫине хурать те савӑнӑҫпа шывланнӑ куҫӗсене пӳлӗм кӗтессине тата урайне тӗллет. Ҫурхи пылчӑкпа вараланса пӗтнӗ урайӗнче пирус тӗпӗсем, хаҫат таткисем сапаланса выртаҫҫӗ. Кӗтессе ирхине урай ҫунӑ чух ҫенӗке кӑларнӑ виҫӗмҫулхи отчетсен ҫыххине купаласа хунӑ.

Сорин ҫак тахҫантанпа хӑнӑхнӑ япаласем хӑйсен яланхи вырӑнӗнче тӑнине курать те савӑнсах отчетне малалла тӑсать. Творчествӑллӑ япала ҫырма кирек хӑҫан та пӗр евӗр обстановка кирлӗ теҫҫӗ. Чӑн иккен. Мӗн тӑвас тетӗн—хӑнӑху!

**Хв. Уяр.**

## АВТАН

### (Шӳт)



Микулай пичче хул хушшине автан хӗстернӗ те хула урамӗ тӑрӑх ҫиллесӗн утса пырать. Ӑна хирӗҫ пӗр урам хушшинчен Марине аппа тухать.

— Автан туянтӑн-им, Микулай пичче?

— Ҫук, хамӑн килти автанах.

— Апла пулсан ӑҫта кайма тухрӑн?

— Сехет тӳрлетекен мастерскойне кайма тухнӑччӗ.

— Э, апла пулсан сирӗн сехет ҫӗмӗрӗлнӗ курӑнать?

— Ҫук, сехет тӳрлетме мар, автана тӳрлеттерме илсе каятӑп, Марине кин. Ӗлӗк ялан ҫурҫӗр ҫитсен шӑп 12 сехетре авӑтатчӗ, ҫавӑнпа та сехет ҫине пӑхмасӑрах ӗҫе ҫӳреттӗм. Ӗнер яланхи пекех, автан авӑтсанах ӗҫе карӑм, мана ик сехет прогул тунӑ тесе ӗҫрен кӑларчӗҫ.

— Апла пулсан, сирӗн автан пӑсӑлнӑ курӑнать!

— Автан пӑсӑлнӑ ҫав, кин, автан. Ик сехет кая юлса авӑта пуҫларӗ. Ҫавна тӳрлеттерсе вӑхӑтра авӑтакан тӑвас тетӗп.

Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн вӗсем икӗ еннелле уйрӑлса кайрӗҫ: пӗри пасара, тепри сехет тӳрлетекен мастерскойне.

**Л. Сартов.**

## ҪӖНӖ ҪЫНСЕМ

Шупашкартан ҫамрӑк хӗрарӑм васкаса утса тухрӗ. Пӑртак кайсан вӑл хӑй пекех ҫамрӑк хӗрарӑма хуса ҫитрӗ. Калаҫу тапранчӗ.

— Инҫете каймалла-и санӑн?

— Кунтан вуникӗ ҫухрӑм теҫҫӗ.

— Мӗн ятлӑ ял? Пирӗнне те ҫавӑн чухлех калаҫҫӗ.

— Ирчекасси. Эсӗ ӑҫтисем тата?

— Мушкассем.

Ик-виҫ километртан Мушкасси ялӗн (Шупашкар р-нӗ) ҫул юппине ҫитрӗҫ.

— Санӑн та ҫак ҫулпах каймалла-и вара?

— Ҫак ҫулпах.

Вӗсем хӗрсех калаҫма тытӑнаҫҫӗ.

— Сирӗн ял пысӑк-и?

— Ытла пысӑках мар. Эпӗ халӗ ҫеҫ Ҫӗрпӳ районӗнчен качча килнӗ те, миҫе киллине пӗлейместӗп. Ял варрипе ҫырма. Унӑн икӗ айккипе пӳртсем ларса тухнӑ. Колхоз правленин ҫурчӗ ҫырма пуҫӗнче ларать. Колхоз председателӗ пухусенче чаплӑ сӑмахсем калама юратать тет иккен. Анчах ӗҫӗ питех пиҫмест пулас.

— Ай-ай! Ара ку каснӑ лартнӑ пирӗн ял пекехҫке!

— Сирӗн ял та ҫапла-и вара?

— Ҫапла ҫав.

— Тен, колхоз председателӗ хӑлхине тутӑрпа ҫыхса ҫӳрет пулӗ?

— Тутӑрпа ҫыхса ҫӳрет ҫав. Ӗҫкӗре такампа ҫапӑҫнӑ та...

— Пачах пирӗнни пек ку! Тӗлӗнмелле! Пирӗн ялта ҫӑл пӗрре ҫеҫ тата. Ӑна та пулин ҫурхи шыв юшкӑн тултарса лартнӑ.

— Пирӗн та ҫаплах!—тесе ҫеҫ хурать тепри тӗлӗннипе.

Утсан-утсан вӗсем иккӗшӗ те пӗр ялах пырса кӗреҫҫӗ.

Ҫак яла ӗлӗк Ирчекасси тенӗ, халӗ Мушкасси теҫҫӗ. Ку ҫамрӑксем иккӗшӗ те халӗ ҫеҫ качча килнӗ пулнӑ иккен, ҫавӑнпа пӗрне-пӗри паллайман.

**Я. Васильев.**

### Футбол сезонӗ пуҫланас умӗн



Пуҫ вырӑнне футбол пӳски
Лартса выляҫҫӗ хӑшӗсем.
Тен, ҫавӑнпах-и пуҫ чашки
Час-час шӑтать, теҫҫӗ вӗсен.

# ИРХИ ЫЙХĂ

Амăшĕ калать:

— Вара çав, ыйхине те ыррăн çывăраймасть пирĕн Пухвир. Хăшпĕр чухне апат çинĕ хыççăн та выртса канаймасть.

— Çапла пулмасăр,—тесе çирĕплетеççĕ унăн сăмахне хăйĕн тантăш-карчăксем.—Вырăнти çынна мĕн калама ĕнтĕ. Яланах тенĕ пек ял çинче. Пĕр канлĕхĕ те çук-тăр...

Арăмĕ калать:

— Таçта чупать пирĕн Пухвир. Тул çутăлас умĕн çеç киле кăптăртатса килет.

— Хăйĕнне хăй пĕлет пулĕ,—теççĕ ăна хăйĕн тантăш-инкесем.—Ĕнер каçхине леш касри Хĕветтÿç патне йăпшăнса кĕрсе кайнине курнăччĕ эпĕ ăна. Мур пĕлсе пĕтерет-и? Тен ĕçпех çÿрет, кирлĕрен çÿрет пуль...

Ачи калать:

— Мана атте темшĕн кашни ирхинех кансĕрлетĕн тесе ятлать.

— Аçунтан та иртерех вăранса çĕмрĕлетĕн пулĕ те ху,—теççĕ ăна хăйĕн тантăш-пионерсем.—Мана ятламасть-çке. Мана атте хăй, кашни ир тенĕ пекех, шкула кайма вăхăт çитнĕ тесе, ачашла-ачашла вăратать...

Пухвир хăй калать:

— Ниçта ĕлкĕрме çук...

Вăл çывăрать. Хĕвел паçăрах тухнă. Ирхи ыйхă тутлă пулать. Пухвир хăй каланă тăрăх, ирхи ыйхă пек тутлă ыйхă тĕнчере те урăх çук. Анчах темшĕн çав ирхи ыйхă, яланах тенĕ пек, чăрмавлă пулать. Такам яланах кансĕрлет ăна. Хăлха айне темĕнле кăптăртатса утнă сасă кĕрет. Е хуран айĕнче шартлатса çунакан кăвать сасси илтĕнет. Чăрмантараççĕ. Вара курнă тĕлĕкне те манса каятăн е урăх тĕлĕк çине куçатăн. Кун пекки Пухвирĕн час-часах пулкалать. Иртнĕ кĕркунне вăл, юр ларас умĕн, ирхи тутлă ыйхăра питĕ те чаплă тĕлĕк курса выртнă. Çанталăк уяр пек. Пĕтĕм халăх уйра пек. Тырă выраççĕ. Çапаççĕ. „Э-эй!— теççĕ пек колхозниксем, Пухвир çине пăхса.—Э-эй, председатель! Эсĕ ертсе пынипе пирĕн ĕç епле çăмăллăн пырать... Эсĕ ертсе пынипе çанталăкĕ те уяр тăрать..." Çав самантрах темĕнле кăптăртатнă сасă Пухвире вăратнă. Чăрмантарнă. Ятлаçнă Пухвир: „Мĕнтери лайăх тĕлĕк,—тенĕ вăл.— Çавна та вĕçне çитиех курса пĕтерме памарĕç пулать. Услови çук. Мĕнпе вĕçленетчĕ-ши?"

Çĕнĕ правлени суйланă чух ун тĕлĕкĕ мĕнле вĕçленни паллă пулнă. Пухвире председательтен кăларнă. Вăхăтлăха бригадир туса хунă. Çак вăхăтра та вăл сахал мар ирхи ыйхăн тутлăхне тутаннă. Сахал мар чаплă тĕлĕксем курнă. Хĕлле пек. Кутсăр-пуссăр çилтăман тухса кайнă пек. Юр тăкăнать çеç пек, купаланать çеç пек. „Ох, аванçке!—тесе каркаланать Пухвир.—Уйри анасем çине хăйне хăех купаланать вĕт юр. Задани тулать..." Кăçалхи хĕл татах та тем тăршшех пуласси çинчен телеграмма килнĕ пек. „Пĕлетĕп хамах,—тесе анаслать Пухвир.—Хĕл вăрăм пулать. Вăрлăхсене те халех хатĕрлемелле мар-ха..."

Çав вăхăтрах хăлха айне темĕнле сасă кĕрет. Такам хăлха патĕнчех мăкăртатать... вулать... чăрмантарать:

Тусем, сăртсем хуп-хура
Юрĕ кайса пĕтнĕрен,
Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен...

„Пулма пултараймасть,—тепĕр май çавăнса выртать Пухвир.—Мĕнле вăл халех хĕвел... Курăк... Ытла тата...

Сасă каллех мăкăртатать. Вулать:

Сивĕ, хаяр хĕл иртет,
Каять йĕрсе хурланса;
Сивĕ куççульпе йĕрет
Иртнĕ куншăн хуйхăрса...

„Да-ну-у!—тет Пухвир, одеялне пуç урлах витĕнет вăл.—Хам та хуйхăратăп. Мĕнле-ха халех иртет сивĕ хĕл... Мĕнле аванччĕ вăл сивĕ пулсан та...

Путăксемпе, варсемпе
Çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анчах мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет...

— Кам вăл!—вырăн çинчен сиксе тăрать Пухвир.—Мĕн чăрмантаратăн?

—„Нарспи" вулатăп,—тет ăна ачи.

— Мĕншĕн вулатăн?

— Иванов юбилейне хатĕрленетĕп.

— Хăçан-ха вăл юбилей?

— Июнь уйăхĕнче.

— Июю-юнь?—тĕлĕнсех кайрĕ Пухвир.—Вара халех хатĕрленетĕн-и?

— Халех пулмасăр,—тет ачи.—Хăвăр та çитес çуракине тахçанах хатĕрленме тытăннă-çке.

— Çапла,—тет Пухвир.—Юбилее лайăх хатĕрленетĕн апла?

— Çапла,—тет ачи.—Эсĕ те çуракине лайăх хатĕрленетĕн-и?

— Хатĕрленетĕп. Сана ăмăртăва чĕнетĕп. Йышăнатăн-и чĕнĕве?

— Яланах хатĕр!—ответлет ачи.

Çак кунтан пуçласа Пухвир иртен те ир тăрса пур ĕçе те йĕркеллĕн туса пынишĕн нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Мĕншĕн тесен, ытла кахалах мар вăл, пăсăк çынах мар. Хăйпе ăмăртакан ача умĕнче намăса юлмастех ĕнтĕ. Çуракине унăн бригади чип-чиперех хатĕрленет.

Амăшĕ калать:

— Вара çав, ĕçне те аван туса пырать пирĕн Пухвир, ĕç хыççăн ыйхине те канлĕн çывăрать. Хам та савăнатăп.

— Çапла пулмасăр,—тесе çирĕплетеççĕ унăн сăмахне хăйĕн тантăш-карчăксем.—Вăхăтра ĕçлени, вăхăтра канни аванах ĕнтĕ...

Арăмĕ калать:

— Таçтан ĕлкĕрет пирĕн Пухвир. Ĕçне те ĕçлет. Киле те вăхăтра таврăнать.

— Хăйĕнне хăй пĕлет пулĕ,—теççĕ ăна хăйĕн тантăш-инкесем.—Пĕркунне вăл лешкасри Хĕветӳç патне кĕнĕ те хăйпе ăмăртма тесе социализмла ăмăрту договорĕ çырса алă пустарса тухнă.

Ачи калать:

— Эп вăраннă çĕре атте çук. Таçта каять...

— Ĕçре вăл,—теççĕ ăна хăйпе тантăш-пионерсем.—Пирĕн аттесем те çапла. Ирех ĕçе каяççĕ. Çуракине хатĕрленеççĕ иккен те...

Пухвир хăй калать:

— Ху маттур та саттур пулсан, пур ĕçе те ĕлкĕрме пулать. Ирхи ыйхă тутлă... Тутлă та, йăлăхтарать вăл. Ир тăни вара нихăçан та йăлăхтармасть, ир тăракан тутă пулать...

Эпир те ун сăмахне çирĕплететпĕр:

— Çапла, ир тăракан тутă пулать, çуркуннехи пĕр кунĕ çулталăка тăрантать.

МИТТА ПЕТĔРĔ.

# КУРĂНСА ТĂРАТЬ

*Н. Васильев ӳкерчĕкĕ.*




— Списокне алфавитпа çырмалла пулман.

— Мĕншĕн?

— Капла манăн ĕçкунĕсем çукки тӳрех çынсене курăнса тăрать. Пĕрремĕшĕ манăн ят вăл.

# КĔВĔÇ ИВАН

Вăхăт каçалана сулăннă. Тулта шăнкăрчсем хăна юрри юрлаççĕ. Вĕсем хăйсен юрри-сăввисенче хăйсене ăшă та лайăх йăвасем туса панă ачасене тав тăваççĕ. Хĕвел фельетон вуланă чухнехи пек тулли кăмăлпа кулать. Ытарма çук илемлĕ çуркунне!

Исполком председателĕ Иван Петрович васкаса килне кĕчĕ те тараннăн сывласа илчĕ. Хаваслă тути арăмĕ çине пăхса йĕлтĕрчĕ. Хăй пĕтĕм сасăпа çапла каларĕ:

— Ех, ытла та аван-çке çуркунне!

Кăна вăл чĕрери савăнăçĕ ниçта шăнăçайманнипе каларĕ пулас.

Чăнах та, камăн чунĕ савăнса çĕкленмĕ пирĕн вăхăтри пурнăçра. Пирĕн ирĕклĕ çĕршывра мĕнтери илемлĕ çуркуннесем пулмаççĕ пулĕ. Пирĕн çуркуннесен шучĕ те çук, вĕсем пĕр вăхăтрах темиçе пулаççĕ: телейлĕх, ирĕклĕх, хаваслăх çуркуннисем. Халĕ тата вĕсен çумне çутçанталăк çуркунни пĕрлешрĕ.

Иван Петрович халĕ çав çутçанталăк çуркуннипе ытларах килĕшнĕ, унпа ытларах савăнать.

Унăн арăмĕ, Наçтук, темшĕн Иван пек хаваслă мар, Иванпа пĕрле савăнмасть. Ăна халĕ Иван хăй те сисрĕ.

— Наçтук, мĕншĕн эсĕ салхуллă пек?—ыйтрĕ вăл арăмĕнчен.

Наçтук ун çине темле шанчăксăр çавăрăнса пăхрĕ те:

— Салхуллă пулмасăр. Саншăн çуркунне аван, маншăн... Эсĕ çуркуннен тутисене пурне те тутанса пăхатăн, а эпĕ...—Наçтукăн чĕлхи пÿлĕнчĕ, калас сăмахĕсене те каласа пĕтерейменĕ вăл.

Иван Петрович хăйĕн арăмĕнчен кун пек мар хирĕçле сăмахсем илтнĕ, анчах вĕсем ăна стена çумне пăрçа пырса тивнĕ пек те туйăнман. Халь калана сăмахсем унăн чĕрине йĕп пек шăтарса кĕчĕç. Çав сăмахсемпе вăл пĕрре мунчала пек çемĕçсе карĕ, тепре типсе хытнă шăпăр пек шăртланчĕ.

— А!.. пĕлетĕп эпĕ эсĕ мĕншĕн çилленнине. Ĕнер шкула ГСО кружокне яманшăн çилленнĕ эсĕ. Çук, ямастăп, паян та ниçта та каймастăн,—карланки татăлас пек кăшкăрса пăрахрĕ вăл арăмне.

Наçтук çав-çавах кăмăллă, пĕр хирĕçмесĕр калать:

— Иван, эсĕ ху пĕрмаях тухса çÿретĕн-çке. Кашни кун, кашни каç таçта каятăн. Эпĕ çавах сана ан кай, тесе вăрçман, чарман. А эсĕ мана эрнере пĕр каç кружока кайнăшăн та вăрçатăн.

Иван тата ытларах хаярланса карĕ, кĕвĕçме тытăнчĕ.

— Эпĕ халăх суйланă çĕслĕ çын, халăх ĕçĕшĕн çÿретĕп. Эсĕ мĕн? Эсĕ кружока каччăсемпе явăçма çеç çÿретĕн пулмалла. Малашне ниçта та каймастăн. Эсир тилхепене кăшт пушатсанах иртĕхсе каятăр.

Наçтук чăтса тăраймарĕ, унăн пичĕ тăрăх куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

— Юрать, Иван, эпĕ ку таранччен хамăн чыса та, санăн чысна та çирĕп тытса усранă, анчах сан юрăхсăр тилхепÿ хыттипе мар, хамăн чун тасипе, хамăн чĕре тÿррипе. Эпĕ кружока усал ĕçе вĕренме мар, пурнăçра, обществăра кирлĕ усăллă ĕçе вĕренме çÿретĕп. Паян манăн юлашки нормăна парса значок илмелле. Паян эсĕ мана кирек мĕнле ятлаçсан та эпĕ кружока каятăпах. Халĕ эпĕ хам ĕçсене пуçтарнă, шкула каятăп ĕнтĕ.

Вăл тухса утрĕ.

Иван ăна хирĕç ним калама та ĕлкĕреймерĕ, пуçне чикрĕ те шухăшлама тытăнчĕ.

Нумай шухăшларĕ вăл, хăй çинчен, арăмĕ çинчен, татах та тем те пĕр шухăшларĕ.

Вăхăт тăхтамасть, „тăвата урипех“ малалла чупать. Иван Петрович çапла шухăшласа ларнă хушăрах каç та пулса çитрĕ. Арăмĕ çапах çук, таврăнмасть...

„Неужели пăсăлсах карĕ ку арăм? Мана итлеми пулчĕ. Хăй тĕллĕн, çитменнине каçхине çÿрет. Çук, капла май килмест. Каччăсемпех явăçнă. Тĕрĕслес, сыхлас, тытас пулать, лайăххах ăс кĕртмелле ăна пĕрре...“

Çакăн пек шухăшсемпе вăл килĕнчен тухрĕ, вăрă-кушак пек йăпшăнса шкул урамнелле утрĕ.

Çурхи каç тĕттĕм. Çурла пек кăна имшерленсе юлнă уйăх çĕр пичĕ çине кăшт çеç çутă парать. Шкул урамне каймалли çул çинчи çырмара шыв кĕрлет. Вăл ишĕлсе аннă кĕпертен, ăна юсаттарман ответлă çынсенчен тăрăхласа кулнă пек, кĕрлесе, ахăрса юхать. Иван шыв хĕрне çитсен чарăнса тăчĕ.

— Мур илешшĕ! Ку благоустройство комиссине исполкомра пĕçертмелле-ха пĕрре. Çак кĕпере те юсаттармалла мар-ши ĕнтĕ вĕсен?—шухăшларĕ вăл хăй çине тÿрремĕн тивекен ответлăха сирсе пăрахас майпа. Хăй çав тери хытă тарăхнипе çиллине шăнараймасăр пĕрех сикрĕ шыв урлă. Сикрĕ те каçса ÿкеймерĕ. Вайлă шыв ăна хăй айне тĕркелесе чикрĕ. Вăл темле сиввĕн—ох!...—тесе çеç кăшкăрса юлчĕ.

Çав вăхăтра унăн телейне ГСО кружокĕнчен вĕренсе килекенсем çырма тĕлне çитнĕ пулнă. Вĕсем Иван кăшкăрнине илтсе васкаса чупса аннă.

Иван вĕсем çитнĕ чухне йăмра тункатинчен çакланнă та мăк татки пек çапкаланса выртнă. Унăн вăйĕ пĕтсе çитнĕ, ÿт-тирĕсем шăнса кÿтнĕ.

Наçтук васкаса ун патне пынă, вăхăта пĕр сая ямасăр картаран икĕ вĕрлĕк кăларса илсе тунката çине хунă. Хăй васкаса кĕрсе шыва кайнă çынна тумтир çухавинчен тытса сĕтĕрсе кăларнă. Вăл нумай шухăшласа тăман, шывран кăларнă çынна хулпуççи урлă çавăрса хунă та килне илсе кайнă.

Иван килĕнче часах тăна кĕнĕ. Унăн умĕнче Наçтук тăнă. Наçтук ăна ĕç мĕнле пулни çинчен тĕппи йĕрĕпе каласа панă. Иван хăйĕн арăмĕ çавăн пек хăюллă ĕç тунăшăн савăннă, Наçтук кăкăрĕ çинче кăвар пек йăлкăшакан ГСО значокĕ çине пăхса савăннă.

— Наçтук!—тенĕ вăл,—мана çăлса кăларнăшăн эпĕ сана чĕререн тав тăватăп. Хам ухмах пулса сана уссăр вăрçнăшăн каçарма ыйтатăп. Сана эпĕ малашне таçта кайсан та чарас çук. Хăть те мĕнле кружока, пухăва çÿре, хăвăн ирĕк. ГСО значокĕ çеç мар, ПВХО, ГТО, Ворошиловский стрелок значокĕсем, Ленин орденĕ ил, эпĕ уншăн тав тăватăп сана.

**Петĕр Тороней.**

## Çӑмӑллӑн ӗçлесе илет

Ытти хуласенчи пекех, Етӗрне хулинче те пасар пур. Тӗрӗссипе илсен, пасар та мар вӑл, асап курса хӑшкӑлакан хисепсӗр япала çеç. Юлашки пилӗк çул хушшинче ӑна вырӑнтан вырӑна куçарса виçӗ çӗре çитерчӗç, халь ӗнтӗ, юлашкинчен, тӗплех вырнаçрӗ пулас-ха, хула тулашне, уя тухса ларчӗ.

Етӗрнере пасар эрнере пӗрре кӑна, шӑматкунсенче çеç пулнине шута илсен, тӳрех калас пулать, ку пасар пӗтӗм халӑх суту-илӳ тӑвакан вырӑн çеç мар, пӗтӗм халӑх уявӗ пулса тӑрать тесен те йӑнӑшах пулас çук. Эрнелӗх ӗçме-çиме хатӗрлесе хурасси — паллах, шӳтле япала мар. Ку кун шкулсем те ӗçлемеççӗ ӑшшӑ.

Ку пасарта, тӗрӗссипе каласан, уйрӑмӑнах палӑрса тӑракан япала çук тесен те юрать. Пӗр япала çеç ӑнланмалла мар пек туйӑнать пирӗншӗн: кунта вырӑнпа усӑ курнӑшӑн вырӑн укçи илеççӗ. Ку, паллах ӗнтӗ, çапла пулмалла та, йӗрки çапла унӑн. Сӑмахран, пӗр-пӗр колхозник пӗр лав вутӑ е пӗр пӑт çӑнӑх илсе пынӑ тейӗпӗр, мӗн тӗлӗнмелли пур кунтан—тӳле пилӗк тенкӗ вырӑн укçи, ӗçӗ те пӗтрӗ. Кам пӗлет, 5 тенкӗ кӑшт хаклӑрах та-и тен, анчах мӗнех вара, ку та йӗркеллех-и тен: пурӗпӗрех никам та пӗлмест—вырӑн укçине тӗрӗс илеççӗ-и санран, тӗрӗс мар-и,— пасарта ку тӗлӗшпе никам та ӑнлантарса параканни çук. Уншӑнах хула советне кайса чӑрманмӑн ӗнтӗ. Пасара пыракансем нимшӗн те мар, укçа пухакана пула çеç кӑшт ниçталла мар пулаççӗ. Кӑнтӑр çуттинчех, чип-чипер хӗвел пӑхнӑ вӑхӑтрах, тавар сутма пыракансенчен вӑл пилӗкшер тенкӗ вырӑн укçи шӑйӑрса илет те, 2 тенкӗ те 50 пус илтӗм тесе квитанци çырса парать. Пӗр сӑмахпа каласан, çуррине государствӑна, çуррине—хӑй кӗсъине.

Халь ӗнтӗ кӑштах математика облӑçне куçса пӑхар. Пасар пулнӑ кун Етӗрнене сахалтан та пӗр 600—700 лав пырать. Вӑтам шутпа шутласан, пӗр пасарта 3000 тенкӗ вырӑн укçи пухӑнать, пӗр уйӑх хушшинче—12000 тенкӗ. Вырӑн укçине халь çеç асӑннӑ системӑпа усӑ курса пуçтарсан, 50 проценчӗ, 6000 тенки, укçа пухакан кӗсъине кӗрсе юлма тивӗç. Ытти укçине, юлашки юлнӑ 6000 тенкине, тата хула совечӗ ӑçта хурать-ши? Пасар хыççӑн ӑпӑр-тапӑрсене, çуп-çапсене шӑлса пуçтармаççӗ. Ятне çеç тукалаççӗ. Çавӑнпа пасар патне çывхарма питӗ хӗн, виç километр аякранах (виç километртан!) сӑмсана киревсӗр шӑршӑ çапать.

**А. Далекий.**

## Кам айӑплӑ?

АШШӖ (ывӑлне): Эсӗ кахал иккен, ачам начартан начар вӗренме тытӑнтӑн. Малтанхи икӗ чӗрӗкре чи кайри ача умӗнчеччӗ, халӗ чи кая тухса тӑнӑ.

ЫВӐЛӖ: Атте, уншӑн эпӗ мар айӑплӑ. Чи кайра пыракан ача Иванов чирлесе шкула çӳремерӗ. Çавӑн пирки эпӗ чи кая тухса тӑнӑ.

*В. МАЯКОВСКИЙ*

## УЙӐРӐЛНИ

***(В. В. Маяковский вилнӗренпе 10 çул тултарнӑ май)***

Авто,—
юлашки франка вакласан.
— Хӑш сехетре Марселе?—
Париж
чупать,
мана ӑсатса
мӗн пур юмахри илемпе.
Йӗпет куçӑма,
уйрӑлу шӗвекӗ.
Ман чӗремре
сентименталлӗ
хускав.
Парижра
пурӑнса вилӗттӗм эпӗ,
пулман пулсассӑн
çавӑн пек çӗр—
Мускав.

**Иван Ивник** куçарнӑ.




**„Вулӑр, ӑмсанӑр, эп—
Совет гражданинӗ!“.**






### Малтанхи çăмарта

— Авал çапла калана: чăхăн çуркуннехи чи малтанхи çăмартине ытла нумай калаçакан çынна çитерсен чăхă нумай çăмарта тăвать, тенĕ.

— Ăна ĕненсен, пирĕн çакă çăмартана Софронова çитермелле. Вăл собранисенче хăйĕн çине обязательствăсем илсе тем чухлех калаçать, анчах ĕçĕсем калаçнипех пĕтеççĕ.

### Туратсем

— Каш-каш вăрман, каш-вăрман, çавă вăрман ма кашлать?

— Çуллен турат хушасшăн.

—Туратне, экскурсантсем хуçса каймасан, хушатех ĕнтĕ.

### Циркуляра кĕтекен

—Кабинетра ларма пăчăх пулса карĕ. Чӳрече рамисене такçанах кăларса хумалла, анчах тăхтама тивет, мĕншĕн тесен циркуляр килеймерĕ.

### Кашни хăй чĕлхипе

АМĂШĔ: Çуркунне пулчĕ, ачам! Çулталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ килсе çитрĕ.

АЧИ: Апла мар, çулталăкăн чи илемлĕ чĕрĕкĕ килсе çитрĕ, темелле.

АШШĔ: Апла та мар, тĕрĕссипе: çулталăкăн чи илемлĕ кварталĕ çитрĕ, темелле.

### Пирĕн урама



тасатас ĕç аван пырать.

### Пулни-иртнисем

ТĔЛĔНМЕЛЛЕ ТĔЛĔК. Парижри пĕр обыватель-мещен иртнĕ каç тĕлĕнмелле тĕлĕк курнă: вăл питĕ хăюллă çын иккен, никамран хăрамасăр бульвар тăрăх утса çӳрет пек

Вĕреннĕ çынсем çак сенсациллĕ япала çурхи сывлăш влиянийĕпе пулнă пулĕ, теççĕ. Ку тĕлĕк пирки франци докторĕ Ы. Упытэ, халиччен тасамарлăхсене сăнанипе чапа тухнăскер, вунă томлă кĕнеке çырма тытăннă.

### Пăчă пӳлĕмре

— Çурхи уçă сывлăша ман пек юратакан çын сахал пулĕ.

— Апла пулсан заняти пĕтнĕ хыççăн ма чĕлĕм тĕтĕмĕ ăшĕнче биллиардла выляса ирттеретĕн?

— Уçăлса çӳренĕ хушăра биллиардла выляса пыма çукран.

### Хатĕр маррине кура

— Пирĕн çак чăхă улт çăмарта турĕ те пăрахрĕ. Ма-ши?

— Райпотребсоюз çăмарта пухма хатĕрленсе çитессе кĕтет пулĕ.

---

# ВĔÇĔ ĂÇТА-ШИ?

Çывăрса выртатăп. Те тĕлĕк куратăп, те чăн. Хăлхасем илтеççĕ: тĕпсакайĕнче шыв шарласа юхни илтĕнет. Ку мĕне пĕлтерет? Ăçтан юхса тухать вăл шыв? Манăн пӳрт Атăлтан инçетре ларать-çке. Айлăм вырăнта та мар, сăрт çийĕнче. Тата ку таврара çăл куçĕ те çук. Ĕçмелли шыв ăсма та инçетри çырмана çӳретпĕр. Кĕркунне тĕпсакайне тарăнлатса алтнăччĕ. Чăнахах тĕпсакайĕнчен çăл куçĕ персе тухрĕ-шим? Ку аван пулĕччĕ... Шыв кирлĕ пулсан урай хăмине уç та, шыв ăсса ил...

Сиксе тăтăм. Тĕпсакай алăкне уçса хутăм.

— Потоп, ачасем!—терĕм эпĕ.

Арăм айхинчен вăранчĕ.

— Мĕн кăшкăрашатăн?—тет.

— Потоп. Пăх-ха, тĕпсакайĕнче çан-çутă шыв.

— Ăçтан тухнă вăл?

— Хам та пĕлместĕп.

Хăпăл-хапăл тумланса тула тухса кайрăм. Пăхатăп: пĕтĕм карташ тулли шыв, тинĕс пек сарăлса выртать. Хуть кимĕпе ишсе çӳре. Ăçтан тухса тулнă ку шыв? Пиртен инçе мар çăл чавма пуçланăччĕ. Тен çавăнтан вăйлă çăл куçĕ персе тухнă пуль?—тетĕп аптранă енне. Апла тесен те майĕ çук...

Килкартинчен тухрăм. Пăхатăп: урам тăрăх та шыв шарласа юхать.

Чупса кĕрсе тимĕр кĕреçе илтĕм те çул çине тухрăм. Çул тăрăх шыв ыткăнса юхса выртать. Вăл урама юхса кĕрет те тĕрлĕ май сарăлса

каять: „Ку ахаль мар, чăнахах ăçта та пулсан çăл куçĕ персе тухнă. Ăçтан тухнине шыраса тупса питĕрсе хурас“, тесе шухăшларăм та, çул тăрăх шыв вĕçне шырама утрăм. Пĕр километр, иккĕ кайрăм. Çук. Шыв ăçтан тухни паллă мар. Ăçта-ши ку шывăн вĕçĕ?

Вырăн-вырăн шыв юхнипе çула чавса анса кайнă. Кайсан-кайсан пĕр машина тĕл пултăм, вăл пĕр шăтăка лакса ларнă. Шоферĕ çĕрти-çӳлтине хăвармасăр çул пăхакансене вăрçать.

— Пӳтсĕрсем эсир! Çул пăхатпăр тесе укçа илсе выртатăр, çак шыва та çул айккипеле уçса ямастăр,—тесе вăрçса тăкрĕ мана шофер.

— Мĕншĕн эсĕ мана вăрçатăн-ха? Эпĕ хам та ку шыв ăçтан тухнине шыратăп. Вĕçне шыраса тупасчĕ, тесе кĕреçе йăтса тухрăм, тетĕп.

Шофер эпĕ çул пăхакан çын маррине пĕлсен, кулса ячĕ:

— Ăçтан шыраса тупатăн эсĕ ку шывăн вĕçне? Халĕ çуркунне вĕт. Юр ирĕлет. Пĕтĕм юр шывĕ çул çине тухать те аналалла ыткăнать. Çула çĕмĕрсе пĕтерет. Кирлĕ тĕлтен çул айккинелле çеç уçса ямалла. Вара вăл шыв çула çĕмĕрме чарăнать,—тесе ăнлантарать мана шофер.

Вара çул тăрăх юхакан шыва айккинелле уçса ятăм. Унтан каялла киле таврăнтăм. Чăнах та тĕпсакайне шыв кĕме чарăннă.

Пирĕн çул пăхакансем çавна та чухласа илеймеççĕ. Кĕркуннеренех çул çинчен шыв юхса тухмалли канавсем чавса хăварсан аван пулнă пулĕччĕ те. Кăçаллăха юрĕ ĕнтĕ, тен, çитес кĕркуннепе хăшĕн те пулин ăсĕ çитĕ-ха...

**М. Н. Данилов-Чалдун.**

# Пĕрремĕш номер

Пĕрре эпĕ тавар сутнă çĕрте ĕçлекен çын ӳпкелешнине илтрĕм:

— Ĕç йывăрланчĕ кутăруçăн: черетсем аптратса çитерчĕç. Костюм илсе килен—черет, велосипед илсе килен—каллех черет. Патефон пирки чут çеç вăрçса каятчĕç. Пĕрре мотоцикл ярса пачĕç. Ну, пĕтрĕм ĕнтĕ, кăна никам та илекен пулас çук, терĕм. Ирхине тăратăп та, лавкана уçнă-уçманах, хыçалти алăкран учитель пырса кĕрет. Пырса кĕрет те, ку мотоцикла кама сутатăр эсир, тет. „Ырă çын пулăр, туянăр, тархасшăн,“ тетĕп хайхине. „Ниушлĕ чăн, виçĕ çул хушши ĕнтĕ мотоцикл туянаймастăп, а кунта, тархасшăн, черетсĕрех параççĕ,“ тет. Çав самантрах туянса ячĕ ку хайхи мотоцикла. Çав кунах, такам-çке, сельпо правленине кайнă та, ман çинчен жалоба панă. Вăл çапла-çапла, хăйĕн тусĕсене хыçалти алăкран мотоцикл сутать, тенĕ. Халь хăрамастăп ĕнтĕ, грузовик илсе килсе лартсан та сутса яратăп. Сутăнмасăр ларас çук.

Кам пĕлет, тавар сутнă çĕрте ĕçлекен хастарлă йĕкĕт кăштах суйрĕ-и тен, анчах ăна ĕненме те пулать: таварсем пирĕн, чăнах та, сутăнмасăр выртмаççĕ. Тавар туянакансем çав тери укçаллă пулса кайрĕç.

Слободо-Стрелецкри (Етĕрне районĕ) сельпо хăйĕн магазинĕсене мотоциклсем кӳрсе килмен. Мотоцикл çинчен калаçма терĕ тата... Кунта, правлени айăпне пула ĕнтĕ, кашни куллен туянма кирлĕ таварсене те кӳрсе килмеççĕ: çук вĕсем кунта. Çавăнпа та пĕр-пĕр тавар кӳрсе килсенех, черет тăрса кайнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук кунта; тавар туянакансенчен мăшкăлани пулать ĕнтĕ çак. Анчах Полянкăри сельпо продавецĕ Горбунов тавар туянма пыракансенчен çакăн пек çеç мăшкăланипе çырлахасшăн мар пулас, çавăнпа вăл урăхла мел шухăшласа кăларнă. Пĕр-пĕр тавар кӳрсе килсен, черет тăрса тухмасăр никама та памасть, халăх пуçтарăнса çитсен тин, çынсене номĕрлесе тухать. Çак ĕçе тума ятарласа палăртнă çын пурă илет те, тавар илме пынă çынсен кăкрисем çине, хăш вырăнта тăнине кура ĕнтĕ, пысăк цифрăсем лартса тухать.

Юрĕ тейĕпĕр. Табак туртас килнĕ çын хăй çамки çине кăмрăкпа та номер лартса яма килĕшме пултарать тейĕпĕр, анчах ыттисем, çĕршерĕн-çĕршерĕн пуçтарăнса пĕр коробка спичка илесшĕн черет тăраканнисем мĕншĕн айăплă?

Номĕрлес-тĕк, паллах, ухмахсене номерлеме юрать, ухмахсене номĕрлес йĕрке пулнă пулсан, Горбунов кăкри çинче кирек-хăçан та пĕрремĕш номер илемленсе тăнă пулĕччĕ.

**А. Далекий.**

## Мĕн тенине мĕнле ăнланаççĕ

** Куракансемпе вулакансем Н. Мранька драматургăн „Виççĕшĕ те пĕр калăпран“ тесе ят панă çĕнĕ пьесине „Тăватташĕ те пĕр калăпран“ тесе ăнланаççĕ (автор та хăйĕн 3 геройĕ пекех, халтура лачакине кĕрсе ӳкнине кура).

* * *

** Трак районĕнчи Супар тата Карай ятлă ялсенчи çынсем „конюхсен çурчĕ“ тенине „вулав çурчĕ“ тесе, „вулав çурчĕ“ тенине „конюхсен çурчĕ“ тесе ăнланаççĕ, мĕншĕн тесен вăл ялсенчи вулав çурчĕсем конюхсен çурчĕсенче ĕçлеççĕ.

* * *

** Апрель уйăхĕн пуçламĕшĕнче „Канаш районĕнчи çĕрĕç пайĕ“ тенине хăшĕ-пĕрисем „колхозсенче мĕн чухлĕ пахча-çимĕç вăрлăхĕ пуррине пĕлмен пай“ тесе ăнланатчĕç, малашне мĕнле ăнланмалла пуласси халĕ паллă мар-ха.

*Н. Колесников*

# ЫЛТТĂН АЛĂСЕМ

## (Пĕтĕм Союзри ăмăртура пĕрремĕш преми илнĕ пĕр актлă пьесă)

ВЫЛЯКАНСЕМ:

Антон Рыбальский—колхозник.
Кĕтерне Рыбальская—унăн арăмĕ, колхозри звеньевой.
Çтаппан Гуляев—завод директорĕ.
Юлька.
Микулай Кавун—колхоз председателĕ.
Профессор.

Сцена: çĕнĕ çуртăн пысăк пӳлĕмĕ. Вырăсла кăмака пулмасан, обстановка тăрăх çак пӳлĕме хулари пӳлĕм теме те пулатчĕ. Малти кĕтесре—клеенка сарнă апат сĕтелĕ, пукансем, çтена çумĕнче—тенкелсем. Ытти япаласенчен хăйсенчен хăйсене асăрхаттараççĕ: пысăк буфет, тĕкĕрлĕ комод. Кăмака умĕнче—тиркĕ-çăпала, сăмавар. Урам енчи чӳречерен сутă нумай кĕрет. Пĕр алăкĕ—тепĕр пӳлĕме кĕмелли, тепĕри—çенĕке. Шăрăх. Июнь уйăхĕ. Уяв кунĕ.

(Сцена çинче Антонпа Кĕтерне. Арăмĕ кăмака умĕнче сăмавар лартать, упăшки—унăн йĕри тавра „автан пек" çаврăнкаласа çӳрет).

АНТОН. Çăва патне кун пек пурнăçа, вăт мĕскер! Çăва патне!.. Кĕпе тӳми лартса паракан çук, а? Тӳме!.. Тен Антон Рыбальскин хăйне валли тӳме хăйĕнех лартмалла? Тен Антон Рыбальскин хăйĕн ĕçне пăрахса хĕрарăм ĕçне ĕçлеме пуçламалла? Тен Антон Рыбальскин хĕрарăм кĕпи тăхăнса тата... тата... тата мĕнте пулин? Мĕскер эсĕ тунката пек нимĕн те чĕнместĕн? Эпĕ санран ыйтатăп?

КĔТЕРНЕ. Эсĕ хăвах пĕлетĕн-çке эпĕ çум çумлама кайнине.

АНТОН. Аха, пуçланать. Хăш чухне вăл нимĕн те чĕнмест, çавăнтах хăлхана çуракан барабан пек сасартăк пакăлтатма пуçлать... Çитет, тетĕп, вăт мĕскер... Суратăп эпĕ сан çине те, эсĕ çум çумлани çине те... Мĕн пăхса анран кайрăн ну?

КĔТЕРНЕ. Эх, Антон, Антон!

АНТОН. Вăт сана тата Антон (*чӳрече патне кайса чĕлĕмне табак тултарать.*)

КĔТЕРНЕ (*ун патне пырса*). Пар кĕпӳне, тӳме лартса паратăп.

АНТОН. Памастăп. Килĕшместĕп. Рыбальскин арăмĕ мĕнле ăнман çынне пĕтĕм ял куртăр. (*Чӳречине уçать те чĕлĕмне туртма пуçлать.*)

КĔТЕРНЕ (*сăмавар патне каялла пырать, чĕртет, трубине хурать. Алăк патнелле утать, унтан Антон енне çаврăнса*). Асту сăмавара (*тухса каять.*)

АНТОН (*алăк еннелле сасартăк çаврăнса тăрать. Урнă пек çиленнĕ. Сăмах тупайман пирки темиçе минут чĕнмесĕр тăрать*), Сăмавар? Сăмавара астумалла тетĕн?.. Акă эпĕ сана часах сăмавар кăтартăп. (*Трубине илсе пăрахать те шала шыв ярса сӳнтерет.*) Ак сана сăмавар! Курса савăнăр! (*Çĕлĕкне илсе алăк патнелле васкаса утать, алăк патĕнче Çтаппан Гуляевпа хирĕç пулса çапăнать.*)

ÇТАППАН. Антон?

АНТОН. Ай, яй-яй-яй!.. Кама куратăп эпĕ. Çтаппан... Çтаппан... Ăçтан килсе тухрăн? Мĕнле эсĕ пит важный пулса кайнă. Директор, турăшăн директор!

ÇТАППАН. Чăнахах директор, вĕт, пĕлетĕн.

АНТОН. Мĕскер эсĕ? Чăнах-и? Кала-ха, тархасшăн, а... Ну, сывлăх, сывлăх мĕнле? Ирт тĕпелелле, лар, каласа пар... Епле килсе çитрĕн эсĕ кунта? Мĕнле çилпе вĕçсе килтĕн? (*Сĕтел патне лараççĕ.*)

ÇТАППАН. Майлă çилĕпе. Курортра пултăм... Кантăм... Сывлăха юсарăм. Киле таврăннă май кунта кĕрсе тухас терĕм—сана курас терĕм, пĕлекен вырăнсене пăхса тухас терĕм.

АНТОН. Ĕлĕкхи тусна манман иккен-ха? Молодец, тăванăм. Спасибо! А эпĕ колхозра бригадирта ĕçлетĕп... Пĕлетĕн-и, сан пекех, калăпăр, строительство пайĕнче директор пеккискер. Яслисем тăватăп—куртăн пулĕ вăрман патĕнче сăртра.

ÇТАППАН. Курмасăр, куртăм. Пит пĕлсе тунă ĕç.

АНТОН. Ого! Антон хăй ĕçне аван пĕлет. Шкула куртăн-и? Ăна та эпĕ тунă, вăл та манăн ĕç. Клуб та...

ÇТАППАН. Хăвна валли тем пысăккĕш çурт лартнă.

АНТОН. Ку апла-ха...—Яслие туса пĕтерсен—мунча тума пуçлатăп. Сана çеç вăрттăн калатăп—часах акă ман çинчен хаçат çине çырĕç. Тен орден та парĕç-и!.. Эсĕ мĕнле шутлатăн, Антон Рыбальскине орден пама пултараççĕ-и?

ÇТАППАН. Мĕншĕн ан паччăр? Тивĕçлĕ пулсан—параççĕ.

АНТОН. Ăнланатни, пĕр икĕ кун каялла ман пата Мускавран писатель килсе кайрĕ, хăй пит важный çав тери, куçлăхпа, анчах типшĕм сăнлă, тӳррипе каласан—имшерке.„ Эпĕ хаçатран—тет—çавăнпа пĕлес тĕтĕп—тет—мĕнле эсир пурăнкалатăр тет. Ну, эпĕ, паллах, ăна пурне те каласа патăм, ывăç тупанĕ çине сарса хунă пек йĕркипе каларăм. Куратăр-и, тетĕп, çак алăсене? Ого, ун пек алăсене шырасан та тупас çук—тетĕп... А ăçта, мĕнле ĕçре усă курма май пулнă çак алăсемпе ĕлĕкхи ял пурнăçĕнче? Çĕре сухалама-и? Анчах ăçта ăна сухаламалла пулнă? Хăвăн çĕрпӳртӳнте-и? Ну, хăвăн çĕрӳ пулмасан, тетĕп ăна, хăвăрах ăнланатăр,—батрака каяс пулать. Анчах манăн карахтĕр çав тери... мĕнле калас, мăнкăмăллă эпĕ. Ого, Рыбальский ун пек çын мар вăл—йытă пек хӳрине унталла-кунталла çавăркаламасть. Çавăнпа, тетĕп хăйĕн çавăн пек карахтер пирки, Антон Рыбальский пурнăçра мĕнчул йывăрлăх тӳснĕ.. Киле таврăнатăн та—ачамсем выçă, арăм йĕрет, хамăн та, ан айăплăр тӳрĕ каланăшăн, хырăм çинче мĕн, хырăмра та çавах. А пыршă-пакартасем—духовой инструментсем пек, вĕресе калакан музык инструменчĕсем пек юрлаççĕ. Анчах ун пек музыкпа ташлама май çук. Хăш чухне çавтери чун ыратать,—тӳсме çук. Ун пек чухне вара урусене алла илетĕн те—çут тĕнче тăрăх пурнăç шырама каятăн... Çавăнпа, тетĕп, Антон Рыбальский ăçта кăна пулман пулĕ, мĕнле ĕçе кăна вĕренмен пулĕ... Платник пулнă, каменщик пулнă, çивитти

витекен пулнӑ, маляр пулнӑ... Кам кӑна пулман пулӗ... Хӑш чухне, тетӗп, самаях ӗҫлесе илкеленӗ. Хӑш чухне, тетӗп, киле таврӑнатӑп, арӑм валли парнесем, хӗрарӑмсене тӗрлӗрен кирлӗ япаласем илсе килетӗп, хам галстукпа. Пӗр вӑхӑта пурӑнкалатӑп килте, анчах манӑн килте ларас килмест. Ялта Антон Рыбальский валли ӑна юрӑхлӑ ӗҫ пулмасан, мӗн усӑсӑр лармалли пур. Ну татах вара урусене алла илетӗн те... Пӗрехинче ҫапла таврӑнатӑп киле,—ялта колхоз организациленӗ. Председатель патне кӗретӗп, а вӑл мана калать: „Ҫитет санӑ Рыбальский, тет, тӗнче тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳреме, лайӑх пурнӑҫ шырама, пирӗн кунта хамӑрӑн ҫӗнӗ пурнӑҫ уҫӑлать, сан аллусем валли ӗҫ ҫителӗклӗ пулать“ тет. Мана мӗн, тетӗп, ӗҫлесе пӑхма пулать, тетӗп. Ҫапла ӗҫлесе пӑхас тесе тытӑнтӑм та... вара .. ҫавӑнтах юлтӑм... Писателе эпӗ калани пит кӑмӑлне кайрӗ, мана вӑл хӑйӗн кӗмӗл портсигарӗнчен пирус парса турттарчӗ те кайрӗ. Вӑт мӗнле ӗҫсем.

ҪТАППАН. Тӗрӗссипе каласан, пур енчен илсе пӑхсан та, пурнатӑн начар мар.

АНТОН. Ӑна мӗнле калас, вӗт... паллах ӗнтӗ нуша курасси паллӑ мар, пурлӑх пур, ҫителӗклӗ...

ҪТАППАН. А Екатерина Ивановна мӗнле? (*Антон алне сулать.*) Мӗскер пулчӗ тата?

АНТОН. Итлеми пулчӗ... Ҫурта пӑхасшӑн та мар... Килти ӗҫсемпе пӗрте интересленмест...

ҪТАППАН. А мӗнпе интересленет вара?

АНТОН. Ай, мӗнне калан! (*алне сулать.*) Анчах мӗскер хӑтланатӑп-ха эпӗ? Хӑна инҫе ҫул ҫинчен ҫитрӗ ҫеҫ, а эпӗ пакӑлтататӑп вӗҫӗмрен: тары-бары, красные товары, теҫҫӗ ун пек чухне выҫӑссем. Шӑпчӑка баснясемпе тӑрантмаҫҫӗ, теҫҫӗ.

ҪТАППАН. Спасибо, эпӗ вокзалра апат ҫикелерӗм.

АНТОН. Ӑҫта вара санӑн багажу пекки?

ҪТАППАН. Сыхлама парса хӑвартӑм. Эпӗ паянах, каҫхине Мускава каятӑп-ҫке.

АНТОН. Мускаврах пурнатни вара?

ҪТАППАН. Мускавра.

АНТОН. Астӑвӑр-ха мӗнле вӑл. Сарлака утатӑн. Астӑватни—Мускавра урамсене чул сараттӑмӑр, ночлежкӑсенче ҫывраттӑмӑр...

ҪТАППАН. Астумасӑр, астӑватӑп. „Йытӑ савӑнӑҫне“ те лайӑх астӑватӑп...

АНТОН. Анчах епле майпа эсӗ директор пултӑн, а?

ҪТАППАН. Ун ҫинчен икӗ сӑмахпа каласа пама май ҫук... Эпӗ сана кайран отчет парӑп,—пурин ҫинчен те йӗркипе каласа кӑтартӑп, а унччен кайса шыва кӗретӗп, вагон ҫинче тусан пусрӗ...

АНТОН. Каяс тесен, кай, директор юлташ, шыва кӗр кайса. (*Ҫтаппана алӑк патне ҫитиччен ӑсатать.*) Анчах ан пут асту, унта пирӗн авӑр пур.

ҪТАППАН (*алӑка уҫса*). Пӗлетӗп, астӑватӑп. Ан хӑра. (*Каять.*)

АНТОН (*чӳречерен пӑхать*). Кала-ха эсӗ, тархасшӑн, а? Директора тухнӑ. А ӗлӗкрех сентӗресем ҫинче хӑнкӑласемпе ҫапӑҫса выртаттӑмӑрччӗ, хамӑр ӳтпе хӑнкӑласене тӑрантарса пурнаттӑмӑрччӗ. Ӑҫта кӑна ҫитсе курман пулӗ? Халӗ, небось, Мускав тӑрӑх машинпа ҫӳрет, кафе-ресторансенче апат ҫиет. Анчах ҫапах та манман Антон Рыбальские. Шухӑшлама пӗлекен, ӑслӑ ҫын, нимех те усал калама ҫук, пултарать, кӑмӑллӑ ача.. Лавкана кайса эрех илсе килес... (*Комод патне пырса укҫа шырать.*) Аҫта ҫӑва патне вӑл укҫана пытарса хунӑ?.. Ага, вӑт ӑҫта иккен. А ку мӗскер тата? (*Кӑвак пурҫӑн лентӑ тупать.*) Ватӑлмалӑх кунра арӑм ухмахланма пуҫларӗ. Кун пек лента ӑна мӗн тума кирлӗ пулнӑ-ха? Ял кулӗ.. Чим-ха, чим, ку хайхи... эпӗ илсе пани пулас... манӑн подарок ку... Хӑш ҫулхине пулчӗ-ха ҫак япала? (*Шухӑшлать.*)

(*Юлька кӗрет.*)

ЮЛЬКА. Сывлӑх авани?

АНТОН. А-а, Юлька! Кӗр, кӗр ан хӑра.

ЮЛЬКА. Эпӗ Катерина Ивановна патне килсеттӗм.

АНТОН. А мӗншӗн ман пата мар. Юленька, а?

ЮЛЬКА. Чим-ха, тӑхта-ха сан пата Дардиха асанне килес тет.

АНТОН. Мӗскер?

ЮЛЬКА. Мӗншӗн тесен саншӑн вӑл ҫунсах каять: уншӑн эсӗ пит килӗшӳллӗ качча тет.

АНТОН. Эх, Юленька, Юленька! Мӗнтарӑн лайӑх хӗр, ангел теме пулать, а чӗлхӳ—асамҫӑ карчӑк чӗлхи пек. Мӗншӗн кирлӗ пулчӗ сана Катерина Ивановна?

ЮЛЬКА. Ҫапла... Кирлӗ...

АНТОН. Пӗр минут тӑхта, наччас килет, итле, мӗн каласа паратӑп сана: эпӗ сана паян тӗлӗкре курнӑ.

ЮЛЬКА. Ну?

АНТОН. Ӑнланатни, эпир санпала вӑрмана кайнӑ пек. Йӗри-тавра ҫавӑн пек хулӑм та ҫӳллӗ хырсем ӳсеҫҫӗ пек... А вӗсен хушшинче эсӗ манран тарса ҫӳретӗн пек—хӑв хӗрлӗ ҫӳҫлӗ, кӗпӳ хӗрлӗ, ну,—ҫулӑм пекех ӗнтӗ. Эпӗ сана хӑвалатӑп пек, сана, калас пулать, тытас, тетӗп. Кӗпӳнтан тытрӑм пек, пӑхатӑп та—эсӗ ҫук та, а ман алӑра вӗҫенкайӑк хӳри. Ҫавӑнтах хайхи сан выранна—шыв чӑххи тӑрать пек. Тӑрать те пуҫне пӑркалать, вӑт ҫапла пӑркалать... Пӑхатӑп—шыв чӑххин пуҫӗ—Кӗтерне пуҫӗ пек. Сасси те унӑн: „Мӗн тӑватӑн эсӗ кунта“?—тет, эпӗ ӑна хирӗҫ калатӑп: „Чӗлӗме шыратӑп, шуйттан пӗлет-и ӑна, чӗлӗм таҫта ӳксе ҫухалнӑ“. Унччен те пулмарӗ—вӑл ҫуначӗсемпе сулкаларӗ те... Ахӑлтатса кулса ячӗ. Ун хыҫҫӑн пӗтӗм вӑрман: Ха-ха-ха-ха!.. Ну, пӗлетӗн-и калама ҫук хӑрушӑ пулса кайрӗ те эпӗ ҫавӑнтах вӑрантӑм. Мӗне пӗлтерет-ши ҫавӑн пек тӗлӗк, е? Эсӗ мӗнле шутлатӑн?

ЮЛЬКА. Ырлӑха мар пулӗ, тетӗп. Тем каласан та сана паян, Антон пичче, арӑму тытса хӗнет пулмалла.

АНТОН. Ну, ну, ну! Сӳпӗлтететӗн кирлӗ мара!.. Ман шутпа ку тӗлӗк вӑрӑм ҫула каяссине пӗлтерет. Эпӗ, вӗт, Мускава каятӑп—мана илме Мускаври тӗп директор ятарласа килнӗ. Эпӗ унта унӑн помощникӗ пулса ӗҫлӗп. Манпа Мускава пыратни?

ЮЛЬКА. А Катерина Ивановна?

АНТОН. Мӗне кирлӗ мана Катерина Ивановна! Антон Рыбальские ун пек арӑм кирлӗ-и?

ЮЛЬКА. Мӗнли тата?

АНТОН. Антон Рыбальские ҫамрӑк, хитре хӗрарӑм кирлӗ, сӑмахран, сан пек хӗр кирлӗ.

ЮЛЬКА. А, сӳпӗлтетрӗ кирлӗ мара.

АНТОН. Лента парас-и сана? Илетни? Вӑт куратни мӗнле илемлӗ лента?

ЮЛЬКА. Ăçтан тупрăр эсир ун пек лента?
АНТОН. Мускавран. Антон Рыбальскийшĕн уйрăм заказпа ячĕç... Лайăх-и? Ну-ка, çыхса пăх-ха. (*Юлькăна ыталасшăн, лентăпа çавăрса илет*).
ЮЛЬКА. Чарăн! Чарăн тенĕ сана ват супнă! (*Кĕрешӳ.*)

(Катерина кĕрет. Антон Юлькаран сасартăк пăрнать, Юлька вăтанкаласа лентăна чăркать. Кĕтерне пĕр чĕнмесĕр Антон патне пырать, Антон хăраса кутăн чакать, алăк çине хăраса пăхкалать.)

ЮЛЬКА. Ну, мĕнле пек, Антон пичче. Тĕлĕкӳ—тĕрĕс пулнă санăн.
АНТОН. Тфу! Сире пурсăра та. (*Васкаса тухать.*)
ЮЛЬКА (*ун хыçĕнчен*). Тьюу!
КĔТЕРНЕ. Ку лента сана ăçтан пырса çакланнă?
ЮЛЬКА. Ну, çăва патне ăна! Çыпçăнчĕ сăпса пек—ил те ил тет.
КĔТЕРНЕ. Ну, (*комод усă выртнине курать те ăнланса илет*). Мĕн тăвас тетĕн, панă пулсан ил, ил!
ЮЛЬКА. Çук, çук, Катерина Ивановна, мана кирлĕ мар... Эпĕ пĕр минутлăха сан пата кĕрсеттĕм те, анчах вăл пулчĕ... Хуçалăх тĕлĕшĕнчен пулăшу кирлĕ мар-ши терĕм.
КĔТЕРНЕ. Спасибо, Юля, кирлĕ мар.
ЮЛЬКА. Эпĕ тата çакна ыйтасшăнччĕ: каçпа йĕтĕне шыв сапатпăр-и?
КĔТЕРНЕ. Обязательно. Куратăн вăн, эпле шăрăх вăхăт.
ЮЛЬКА. А мĕн тума та пулин, пулăшса парăп?
КĔТЕРНЕ. Çук, çук, Юля, кирлĕ мар.
ЮЛЬКА. Ну, апла тăк, тиркекене тирĕк тĕпĕ пултăр. Параська патне каймаллаччĕ-ха. (*Чупса тухать.*)
(*Кĕтерне лентине илет те аллипе йăвалакалать, комод патне пырать, лучăрканнă лентăпа питне хуплать те йĕрет... Çтаппан кĕрет.*)
(*Кĕтерне вăл кĕнине курман-ха. Çтаппан ерипен ун патнелле пырать те ун хыçĕнче пуçне сулкаласа тăрать.*)
ÇТАППАН (*пит ăшă кăмăллă*). Мĕн пулнă сана, Катерина Ивановна?
КĔТЕРНЕ (*сасартăк шартах сикет, çаврăнать. Тĕлĕнсе*). Çтаппан! Çтаппан Петрович!
ÇТАППАН. Вăл хăех. Сывлăх аван-и? (*Алă тытать. Нумайччен ямасть унăн аллине.*) Мĕн пирки ку?
КĔТЕРНЕ (*куççульне лентăпа шăлать*). Ахалех... Хĕрарăм куççулĕ вăл—шыв пек. Епле эсĕ пирĕн пата? Вăт чăнахах кама пачах кĕтмен... Лар чей ĕçĕпĕр. Антон та килсе çитет...
ÇТАППАН. Эпĕ унпа курăнăшса каласрăм. Ну, пурнăç мĕнле пырать? Эпĕ ватăлнă пулмалла, тĕрĕс вĕт?
КĔТЕРНЕ. Урăхланнă, сăн-пит улшăннă—урамра хирĕç пулсан та палламасăр иртсе кайнă пулăттăм. Эпĕ ват карчăк пулса юлтăм. Куçсем çеç тăрса юлчĕç. Икон çинчи пек. Кивĕ иконсем çинче çапла пулать вара,—пичĕ çинчи сăрă кайса пĕтнĕ, сăмси ăçтине, тутисем ăçтине пĕлме çук, нимĕн ăнланма çук, а куçĕсем вара—чĕрĕ куçсем пек.
ÇТАППАН. Куçсем çинчен эсĕ тĕрĕс каларăн. Куçсем санăн—сӳнми куçсем. Сăн-питӳ те... ахалех хурлатăн... Мĕскер пуçна суллатăн? Пăх-ха тĕкĕр витĕр.
КĔТЕРНЕ. Нимĕн пăхмалли те çук унта, пĕлетĕп ахаль те. Ăçта халĕ эсĕ?.. Авлантăн пулĕ?
ÇТАППАН. Çук, авланман.
КĔТЕРНЕ. Ма апла тата?
ÇТАППАН. Ахалех... Хĕрхен тархасшăн лентăна Екатерина Ивановна.. эсĕ ăна пĕтĕмпех лучăркаран.
КĔТЕРНЕ. Лентăна-и?., Эсĕ вĕт çак лентăна пĕлетĕн?
ÇТАППАН. Эпĕ? Чим-ха, ниушлĕ çавă хăех?
КĔТЕРНЕ. Самай çавă хăех... Астăватăп, пырса кĕтĕн эсĕ ун чухне çĕре чавса тунă пӳрте, а эпĕ—выçă, шăннă, çĕтĕк-çурăк тумтирлĕскер, кăкăр çумĕнче ача макрать, а кăкарта сĕт çук... Землянка питĕ пĕчĕкçĕ, тĕттĕм... „Катерина Рыбальская çакăнта пурнать-и?“ терĕн эсĕ. „Сана упăшкунтан посылка.“ Тыттартăн ман алла пĕр çыхă япала. Эпĕ укçа пулĕ тесе, питĕ хĕпĕртерĕм, анчах салатса пăхрăм та—лента. Мана тӳсме çук йывăр пулчĕ çавăн чухне, чĕре хурланчĕ.
ÇТАППАН. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ хам та çав çыхăра укçа пулĕ тесе шутланаччĕ.
КĔТЕРНЕ. Чим-ха, епле эсĕ апла шутлама пултарнă?—укçа вĕт уйрăм çĕрте, кăсъюнта пулнă...
ÇТАППАН. Кăсъере? Ах, чăнахах çапла, кăсъеречче. Çаклантăм. Аташрăм. Куратăн-и, ку иртнĕ ĕç ĕнтĕ, укçа тĕрĕссипе каласан, пулман унта.

(*Вĕçĕ тепĕр номерте*).

С. Ялавин куçарнă.

---

## Хаçатсенчи тумхахсем

Чăпта çапакан çынсем артельсенче пĕрлешсе тăраççĕ, вĕсене „кустарь“ теççĕ, „суя чăпти çапакансене“ кустарь темеççĕ...

Первомайский райхаçатăн мартăн 12-мĕшĕнче тухнă номерĕн иккĕмĕш полосинче пичетленĕ картина айне çырнине ан ĕненĕр. Ăна „суя чăпти çапакан“ çынсенчен пĕри çырнă пулас, мĕншĕн тесен...

Çав картинăри çынсем, чăннипе, Е. И. Козловăпа Э. С. Рудковская пулаççĕ. Вĕсем Смоленскри йĕтĕн комбиначĕ çумĕнчи ватерщицăсен курсĕнче вĕренсе тухнăскерсем.

Хаçат редакторĕ Шайманов вĕсем çине темĕншĕн „тарăхнă“. Çине тăрсах пĕрин çинчен хут пĕлмен çын тесе ят кăларнă. Унпа çитмен, хĕрарăмсен ячĕсемпе хушамачĕсене те, вĕсем пурăннă районпа область ячĕсене те, вĕсем ĕçленĕ вырăн ятне те урăх майлă çырса „пĕлтернĕ“ (Вологда облаçĕн Череповец районĕнчи Богословск ялсоветĕнче пурăнакан „комсомолец Зина Лапина „Активист“ ялхуçалăх артелĕн колхозницине А. И. Лубановăна хут вĕрентет“, тенĕ.)

„Суй та, анчах виçине пĕл“ тесе ваттисем кам çинчен калани не халĕ пĕлтĕмĕр ĕнтĕ.

* * *

Çĕмĕрлере кăларакан „Социализмлă ĕç“ хаçат февралĕн 9-мĕш кунĕнче тухнă 12(575)-мĕш номерĕнче пĕрремĕш страницăра, Совет Союзĕн Геройĕ Л. М. Лаптев сăн-ӳкерчĕкне пачĕ. Ăна хаçат редакторĕ П. Т. Лукин вулакансене Совет Союзĕн Геройĕ И. М. Ульянов тесе ĕнентерчĕ. Пире çакă тĕлĕнтерет: хаçат редакторĕ Лукин юлташ хăйĕн хушаматне мĕнле урăх çын хушамачĕпе арпаштарса ямасть-ши?

Эм. Йĕс.

# Ача-пăча страници

## Кун пек ан пултăр

— Анне. Эпĕ испытанире ыйтнисене хирĕç каласа пынисем учителе çавтери килĕшрĕç пулмалла, çавăнпа вăл мана кĕркуннене тата тепĕр хут ответлеме хушса ячĕ.

## Сăлтав мĕнре?

АШШĔ: Петя, эсĕ математикăпа мĕншĕн „плохо“ туянтăн.

ПЕТЯ: Мĕншĕн тесен мана панă задачăна эсĕ тĕрĕс мар шутласа панă.

## „Ăнлантарать“

— Ма пианино клавишĕсем пĕр тĕслĕ мар-ха.—хăшне шурă, хăшне хура тунă?

— Ара, хури çине хуйăхлă кĕвĕ каланă чух, шурри çине савăнăçлă кĕвĕ каланă чух пусаççĕ,—çавна та пĕлместĕн-и?

## Чарусăр ачасем

I

АМĂШĔ: Эсĕ ма çисе ятăн ку канхвета? Эпĕ сана текех нимĕн те илсе памастăп-ха куншăн. Арчара тата çур кило канхвет пурччĕ, ăна та памастăп.

АЧИ: Эпĕ унтине те çисе ятăм.

II

КŸРШĔ АРĂМĔ: Мĕнле намăс мар сана пĕчĕккĕллех пирус туртма?

АЧА: Хам та пирус аван маррине чухлатăп, анчах мĕн тăвас-ха, махорка ытла хаярçке.

## Виçĕ кун çуман

— Урокна пĕлетĕн пулсан, ма ал тăратмарăн?

— Алла кăтартас килмерĕ, виçĕ кун çуман.

## Пĕлтерӳсем

Хампа юнашар ларма умножени таблицине аван пĕлекен ача

**шыратăп.**

3-мĕш класра вĕренекен Петя Пятьюпятиков.

Географипе зачет тытмалли вăхăт çитсе пынине кура,

**Мадагаскар**

ăçтине срочно пĕлтерме ыйтатăп.

**Вĕренекен Нилов.**



*Ю. Ганф ӳкерчĕкĕ.*

— „Сумма“ сăмахра ма пĕр „м“ çеç çыртăн?

— Пĕрне çыртăм, тепри асра.

# Юлташ тупрăм

Первомайск ялне таврăннă чухне эпĕ хамран чылай малта çурран пыракан хĕре хуса çитрĕм. Унăн чиперлĕхĕ мана илĕртнипе пуçăмра ăна хампа пĕрле лартас шухăш çуралса тухрĕ. Чĕнме те хатĕрленнĕччĕ, анчах çав вăхăтрах вăл мана хама ятранах кăшкăрса ячĕ.

— Мана та хăвăрпа пĕрле лартса кайăр!

Эпĕ лашана чарса, ăна хам çумма лартрăм та тĕлĕннипе тӳрех вăл мана епле паллани çинчен ыйтрăм.

Хĕр çемçен кулса илчĕ, çав çемçелĕхпех кĕскен ман ыйтăва ответлерĕ.

— Çапла, эсир мана паллаймастăр пуль çав, анчах эпĕ сире лайăх пĕлетĕп, эсир ман Коляпа пĕрле ĕçленĕ.

— Апла эсир мăшăрлă-им?—ыйтрăм эпĕ пăртак кӳреннĕ пек пулса.—Ман юлташăн мăшăрĕ? Хăçантанпа?

— Мăшăрланни ытла нумаях пулмасть те, анчах ăна хатĕрленнипе вăхăчĕ ытларах иртрĕ вара.

— Мĕнле ăна „хатĕрленни“?—ăнланмарăм эпĕ.

— Ара, хатĕрленмесĕр нимĕн те пулмасть-çке,—кулса илчĕ ман юлташ,— çапла эпир те ăна хатĕрленнĕ. Çак хатĕрленĕвĕн пĕчĕк историйĕ пур. Эсир интересленсен, эпĕ ăна кĕскен пĕлтерме те пултаратăп. Эсир каччă, тен, вăл сире кирлĕ те пулĕ.

Вăл каллех ман çине пăхса кулса илчĕ те калаçма пуçларĕ.

— Вăл пирĕн яла виçĕ çул каялла пынăччĕ. Чипер те маттур каччă. Кĕске вăхăтрах ăна ялти мĕнпур çамрăк иленчĕ. Вăл шутра эпĕ те пулнă. Кашнинех пирĕн, хĕрсен, ăна хăй майлă çавăрса илес кăмăл пулнă, мĕнле те пулин меслетпе ун патĕнчен ыттисене хĕсce кăларас шухăш пулнă. Шăп та шай конкуренциех ĕнтĕ. Тунмастăп çак „конкуренцине“ эпĕ те хутшăннă. Ара, мĕн тăвас тен, „юрату вăл вутран та хĕрӳрех“, теççĕ вĕтха. Çапла, çуллахи пĕр лăпкă каç мана унпа ларма тĕл килчĕ.

— Ну, тĕрĕссипе калăр-ха, кама саватăр ĕнтĕ эсир çак ялта, Николай Васильч?—терĕм эпĕ çав каç. Вăл мана татăклăн ответ памарĕ, „пурте аван сирĕн ял хĕрĕсем“, терĕ те йăвашшăн кулса илчĕ. Ман ăшăмра ăна хампа çеç калаçтарас кăмăл çулăмлансах йăлкăшать, ыттисене унран сивĕтес шухăш пуçăмра çавăрăнать. Вара эпĕ çавăн çинчен калаçма пуçларăм.

— Сисетĕп ĕнтĕ,—терĕм ăна эпĕ ун чух,—сисетĕп, Николай Васильч, сире юрăхлă хĕр пирĕн ялта çукпа пĕрех. Çапла мар-и, Николай Васильч?

— Пурте лайăх-çке,—тет вăл.

— Çук çав, Николай Васильч,—тетĕп эпĕ.—апла мар. Акă речĕпе шутласа пырар-ха. Вара эпĕ шутлама тытăнтăм.

Альтяç—аван хĕр темелле, анчах кăштах калаçма пĕлмест. Маруся илсен, эсир каллех ăна савмастăр. Ĕмĕрне те çи-пуçне тасатаймасть. Краçук лăпкă та, таса та, ĕçчен те, анчах сăн пуçĕ каччăсене илĕртмеллех мар пек. Наçтаç пур енчен те килсе пĕтнĕ, ăна нихĕш енчен те тиркĕме çук, анчах унăн савнийĕ пур, вăл ăна нихăçан та пăрахмасть.

Альтук—чăн-чăн альчаман. Татьян—лутрарах, тетĕп. Хам йăмăка та мухтамастăп эпĕ: ĕнер мана чутах çапатчĕ... Çапла эпĕ хамăн ухмах пуçăмпа хамăн тантăшăмсене хурласа пĕтертĕм. Вĕсен хушшинче пĕр хама çеç ырă туса хăвартăм. Çапла мана Николай Васильч савĕ тесе шутланă ĕнтĕ эпĕ. Анчах пĕтĕмпех тӳнтерле пулса тухрĕ. Манпа вăл кун хыççăн пачах çӳреми пулчĕ. Эпĕ пăрахăçланă хĕрсемпех калаçать. Тахăш вăхăтра тата вĕсене пурне те комсомол ретне явăçтарнă. Çапла вара эпĕ сисмен хушăрах пĕр пĕччен тăнă юлнă. „Хĕр тантăшсем ман çинчен сивĕтсе пĕтерне пулмалла“, тесе шутлатăп хам ăшăмра. Хамăн тӳсме çак ăш çунать. Мĕн тăвас, тетĕп. Мĕнле тавăрас вĕсене... Çак шухăшсем аталанса пынипе тата вĕсене хам куçран çухатас килмен пирки эпĕ те комсомола кĕрсе кайса, кашни пухăвах çӳре пуçларăм. Вара маншăн кунта кĕтмен япала пулса тăчĕ: эпĕ хам çиленсе тăракан тантăшсем манпа пурте ыррăн калаçма пуçларĕç, эпĕ вĕсен ретне тăнăшăн хавасланса карĕç. Николай Васильч та кăмăллăн калаçать. Ку вара маншăн темрен те пысăк хавaслăх пулчĕ. Малалла политика занятийĕсем иртерме пуçларĕç. Яланах Николай Васильч тĕнчери лару-тăру çинчен, хамăрăн шалти ӳсĕмсем çинчен тата ыттине те ăнланмалла чĕлхепе каласа паратчĕ. Ох, лайăх калаçатчĕ вăл, итленĕçем итлес килетчĕ ăна. Çак вара вăл манăн иккĕмĕш хавaслăх пулчĕ. Часах эпĕ çак занятисен активлă членĕ пулса тăтăм, хаçатсене вулама пуçларăм. Вара часах манăн ят комсомол организаци умĕнче те, ял хушшинче те палăрса тухрĕ. Ака вăхăчĕсенче, тыр-пул пуçтарнă вăхăтра та, суйлавсен умĕнхи вăхăтра та мана участоксем уйăрса пачĕç. Эпĕ агитатор ĕçне чун-чĕререн юратса ĕçленипе мана пĕтĕм халăх юратма пуçларĕ. Пĕррехинче район хаçатра лайăх агитаторсен спискине пичетлесе кăларнă. Вăл списокра ман ят та пулнă. Эпĕ хам мĕнле улшăнса кайнинчен тĕлĕнсе ларатăп. Шăп çав вăхăтра ман пата Николай Васильч çĕнĕ хыпар илсе пычĕ.

— Елюк,—тет вăл,—сана эпир пропагандистсен курсĕнче вĕренмелле турăмăр.

Хăй ман çине пăхать те кулать, „матур“, тет. Кунта ĕнтĕ ман хавaслăх ăçта пырса çитнине хам та калама пултараймастăп. Вĕренме карăм вара эпĕ. Çакна калас пулать: ĕçе юратса ĕçлесен, вăй вĕçĕмсĕрех ӳсĕнсе пырать. Манăн вĕренӳре те самаях çитĕнӳсем пула пуçларĕç. Акă ман çине чипер каччăсем куç хывма пуçларĕç. Вĕренӳри çитĕнӳпе пĕрлех, хавaслăх вĕçĕмсĕр ӳссе пырать ман. Тӳсеймерĕм, кун çинчен Николай Васильча çырса пĕлтертĕм. Вара вăл мана пĕрремĕш хут хăй мана юратни çинчен пĕлтерчĕ. Хамăн тахçантанпах кĕтнĕ ĕмĕт çитнĕшĕн эпĕ юлташăмсен умĕнчех ташласа ятăм. Хăвăрах куратăр ĕнтĕ,—терĕ Лена (халь ăна çапла чĕнеççĕ),—эпĕ хамăн хĕр тантăшсем çинчен Николай Васильча элеклесе вĕсен таса чунне варалани ытлашши тата илемсĕр япала пулнă. Юлашкинчен çакна каласшăн эпĕ сире: илемлĕхпе чеченлĕх çеç мар илĕртет кучухнехи çамрăксене, çепĕç тата йăпалти чĕлхе те мар, халăх ĕçĕшĕн вĕри кăмăллă пулни, ĕçе юратни, ăна малалла тăсни, чăнлăх, хамăр тăш-

мансене курайманни—акă мĕн кирлĕ ĕнтĕ хальхи юратура.

Манăн Лена сăмахне пĕтерсе кăштах лăпланса тăчĕ. Урхамах пек лаша пире сĕтĕрсе малалла вĕçет.

— Халь ăçта ĕçлетĕр ĕнтĕ эсир, Лена?—ыйтрăм эпĕ унран, сăмаха çĕнĕрен чĕртсе ярас шутпа.

— ВЛКСМ Райкомĕн пропагандисчĕ.

— Николай Васильч ăçта тата?

— Вăл халĕ Украинăра, Хĕрлĕ çар службинче. Тăтăшах çыру çӳрететпĕр. Çапла çав, элекпе, çынсене варалама тăрăшнипе çамрăксен кăмăлне çавăрма çук,—терĕ юлашкинчен манăн юлташ Лена.

**М. Аркай.**

## Учет пирки

Грексен авалхи философĕ Сократ çапла каланă: „Эпĕ хам нимĕн те пĕлменнине çеç пĕлетĕп", тенĕ.

Шупашкарти „Стройдеталь" заводăн аслă инженерĕ Смолов та: эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, тет, йывăç материалĕсем çитменнине пула миçе сехет простой пулни çинчен ыйтсан. Мĕншĕн тесен тăтăшах пулса пыракан простойсене учета илсе пыман вăл.

Простойсене шута илсе пыма ятарласа учетчик тытмалла.

*Н. Сверчков ӳк.*

*Шухăшĕ Н. Васильевăн.*



— Паян миçе ĕçкунĕ туран?
— Ĕçкунĕ мар, мăнкун турăм.

**Секретарь и вып. редактор И. Илларионов.** **Зам. отв. редакт. В. Я. Яковлев**

Сдано в производство 1/IV-40 г. Подписано к печати 22/IV-40 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1409. Заказ № 245.

Формат бум. 58×84 1/8. Объем 2 п. л. Тираж 8750 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ", г. Чебоксары. Тип. № 1 НКМП ЧАССР

## „ХĂТĂЛĂР, КАМ ХĂТĂЛМА ПУЛТАРАТЬ“

**Хăйсем нейтральнăй çĕршывсене „хутĕлеме“ пулнинчен Англипе Францири агрессорсем çав çĕршывсене империализм вăрçине туртса кĕртес тĕлĕшпе усă кураççĕ.** (Хаçатсенчен)



— Ăçта чупатăр эсир?

— Ара, Англия пирĕн государство хăрушăсăрлăхне хӳтĕлеме пулнине пĕлместĕр-и мĕн эсир? Вĕçтерĕр пирĕнпе пĕрле...